ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ 2012

# Çĕнтерӳ çулĕ

1930 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тухать

сайт адресĕ: www.put-pobedy.cap.ru

электронлă адрес: print@vurnar.cap.ru

ВĂРНАР РАЙОН ХАÇАЧĔ • 2012 çул • нарăс /февраль/ уйăхĕн 1-мĕшĕ • юн кун • 13/10482/ № • Хакĕ ирĕклĕ

ЮБИЛЕЙ

## Писатель ячĕпе

**Ентешĕмĕр чăваш халăх писателĕ Анатолий Емельянов çуралнăранпа 80 çул çитнине халалласа республикăра тĕрлĕ мероприяти иртрĕ. Çак кунсенче çыравçăн тăван тăрăхĕнче те чаплă тĕл пулу йĕркеленĕ.**

Хапăсри вăтам шкулта иртнĕскере, республикăн культура министрĕн заместителĕ Татьяна Казакова, район администрацийĕн социаллă аталану пайĕн пуçлăхĕ Сергей Гордеев, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн ăсчахĕсем Виталий Родионов, Георгий Федоров, Ирина Софронова, Ирина Кириллова та хутшăннă.

Шкул ачисем писатель творчестви тăрăх пуян программа хатĕрленĕ. Унăн малтанхи сăввисене вуланă, пултарулăхĕпе кун-çул тапхăрĕсене аса илнĕ.

Вăрнарсен тепĕр паллă та пултаруллă çыравçи, поэчĕ, нумай çул «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçат редакторĕнче ĕçленĕ Михаил Васильев чăваш халăх писателĕ çинчен çав тери кăсăклă самантсемпе паллаштарнă, А.Емельянован литературăри вырăнĕ çав тери пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртнă. Аса илӳсемпе çавăн пекех çыравçăпа пĕр ялта çуралса ӳснĕ Григорий Скворцов тавра пĕлӳçĕ те, А.Емельяновăн тантăшĕ Владимир Скворцов та савăнтарнă.

Уйрăмах ачасем А.Емельяновăн хĕрне Раиса Анатольевнăна кăсăкланса итленĕ. Писатель ывăлĕ Владимир шкула кĕнекесем парнеленĕ.

**Хамăр инф.**

## Хастарлăх – çитĕнӳ никĕсĕ



Виçĕм кун район администрацийĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендиачĕсене савăнăçлă лару-тăрура чысларĕç. Пирĕн районтан вĕренӳри, ĕçри творчествăлла ăнтăлушăн патшалăх хавхалантарăвне 20-ĕн тивĕçнĕ.

Свидетельствăсемпе чысланă май, район администрацийĕн пуçлăхĕ Леонид Николаев çамрăксене пурнăçра яланах хастар пулма, пысăкрах çитĕнӳсем патне туртăнма ăнăçу сунчĕ. Вĕрентӳпе çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕ Николай Иванов стипендиатсем ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулнине, вĕсен йышĕ районта çулсеренех ӳссе пынине палăртрĕ.

С.ЧИКМЯКОВА.



## Пĕлтерĕшлĕ ыйтусем тавра

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Леонид Николаев «Броневик» кооперативăн сĕт-çу фермине çитсе курнă. Владислав Репин ертӳçĕ каланă тăрăх, кунне вăтамран кашни ĕнерен 7–8 литр сĕт суса илеççĕ. Леонид Николаев ĕнесен продуктивлăхне ӳстерессипе тĕллевлĕ ĕçлемелли пирки каланă. Хуçалăх ертӳçи выльăх-чĕрлĕхе апат парас ĕçе механизацилесси тĕп ыйтусенчен пĕри пулнине çирĕплетнĕ. Акă кооперативра кормосмеситель тата апат валеçекен агрегат туянма палăртаççĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Леонид Николаев, Калинино ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Людмила Иванова, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн ректорĕ Николай Кириллов, «Вурнарыдорстрой» предприяти ертӳçи Ольга Куликова ĕç çыннисемпе тĕл пулнă. Халăха сĕт хакĕ чакса пыни, алкогольлĕ продукцие сутакансене явап тыттарманни тата ытти те хумхантарнă.

Тĕл пулу Хăмăшри шкулта та иртнĕ. Ольга Куликова кăçал та ку шкулти чи лайăх вĕренекен тата обществăлла ĕçре чи хастар ачасене «Вурнарыдорстрой» предприятин стипендине панине çирĕплетнĕ. Маттур вĕренекенсем çулталăк тăршшĕпех уйăхсерен 200-шер тенкĕ илсе тăрĕç.

Калас пулать, Ольга Куликован пурнăçран вăхăтсăр уйрăлнă мăшăрĕ Иван Николаевич шăпах çак шкулта вĕреннĕ.

Л.ИВАНОВА.

## В.Путинăн «Эпир вăй-хал пухакан Раççей ыйтăвĕсене хуравлама тивĕç» статйине хаклаççĕ

## Пĕтĕмлетӳ вăхăчĕ çитрĕ

Совет Союзĕ саланнă хыççăнхи тапхăра куç умне кăларатăп та – пирĕн общество экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕнче çав тери кăткăс, йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкнĕшĕн çав вăхăтри влаççене «çĕр çĕмĕрсе» вăрçнине халĕччен манаймастăп. Историшĕн питех те кĕске 20 çул хушшинче Раççей мĕн таран тертлĕ, çав хушăрах сулмаклă çул утса тухнине курса тăни паян мăнаçлăх туйăмĕ çуратать. Ара, кĕçвĕç пуç хĕрлĕн сикес «ахрат çырминчен» иртсе тĕллевлĕ те шанăçлă çул-йĕрпе тăваллах кайса пытăмăр мар-и? Пысăк улшăнусенчен ытларахăшĕ В.Путин Правительство пуçлăхĕн тата Президент «тилхепине» çирĕппĕн тытнă çулсенче пулса иртнине камах йышăнмасăр тăма пултарĕ?

Статйинче премьер шăпах хăй ĕçленĕ вăхăтра пурнăçа кĕртнĕ малтанхи программăсене пĕтĕмлетет. Кăкăрне çапса мар, халăхпа мухтанмасăр, шăв-шав кăлармасăр калаçса. Малашлăхра хамăра йывăрлăх-чăрмавсем кĕтсе тăнине те пытармасть вăл, вĕсене хăюллăн çĕнтерсе пыма тӳрĕлĕх туйăмне чи малти вырăна хуракан, обществăн пĕрлехи пахалăхĕсемпе çирĕпленнĕ çынсем кăна вăй-хал тупасса шанса тăнине палăртать. Чăнах та ĕнтĕ, ирĕклĕ çынсен обществисенче çеç çынлăхпа чыслăхăн таса палăрăмĕсем çуталса кайĕç. Раççейре нумай пулмасть кăна йĕркеленме тытăннă вăтам класс çыннисен хушшинчен çавăн йышшисем ытларах та ытларах тухасса шанас килет. Темĕнле йывăрлăх, кĕтмен-туман пăтăрмах «пуçне» çĕклес пулсассăн та вĕсене пусарма е сирсе яма çĕнĕ ăру çыннисен вăй-халĕ те, ăс-хакăлĕ те çитмелле! В.Путинăн статйине вуласа тухсан кирек камăн кăмăлĕнче те манăнни пекех хавхаланулла туйăмсем çуралĕç тетĕп.

И.ПЕТРОВ.

## Электронлă регистратура пулăшать

«Электронлă регистратура» (www. med.cap.ru сайтра вырнаçнă) – килтен тухмасăрах тухтăр патне çырăнмае сывлăх хуралĕнче тăракансен ĕç графикне пĕлме пулăшать. Çĕнĕ информаци технологине Вăрнар район тĕп больницинче 2011 çулхи пуш уйăхĕнчен ĕçе кĕртнĕ. Çак тапхăрта электронлă регистратурăпа 1746 çын усă курнă. Çавăн пекех район тĕп больницинче тимлекен тухтăрсем патне 2-52-82 телефонпа шăнкăравласа çырăнма пулать, Калинино тăрăхĕнчисен – 60-3-31. Сывлăх сыхлавĕн республикăри учрежденийĕсен специалисчĕсен пулăшăвĕпе те усă курма пулать. Вĕсем патне пĕтĕмĕшле врач практикин тухтăрĕсем урлă çырăнмалла.

О.КАЗАКОВА,
**Вăрнар район тĕп больницин тĕп врачĕ.**

АСĂРХĂР: КОНКУРС!

## Ăсталама пĕлсен юртан Ан юлсамăр конкурсран

**«Химик» спорт клубĕ «Август» Фирмăн «Вăрнарти хутăш препаратсен завочĕ» филиалĕпе тата районти вĕрентӳпе çамрăксен политикин пайĕпе пĕрле район çыннисем валли каллех кăсăклă мероприяти ирттерме хатĕрленет. «Снежная фантазия» конкурс чи хăюллă шухăшсене вăратма пулăшĕ, ăстасен аллинче юр катăкĕ тĕрлĕ сăнарсен, чĕр чунсен кӳлепиисене çаврăнĕ.**

Конкурс çак шăмат кун, февралĕн 4-мĕшĕнче, Вăрнарти «Химик» стадионта иртет . Унта 3–7 çынран тăракан çемье, ĕç коллективĕсен, шкулсемпе ача сачĕсен, ытти командăсем хутшăнма пултараççĕ. Ĕç реквизичĕсене хутшăнуçăсен хăйсемпе пĕрле илсе килмелле. 12 сехетре пуçланать. Çĕнтерӳçĕсене тĕрлĕ номинаципе хаклаççĕ, вĕсене хаклă парнесем кĕтеççĕ.

С.СВЕТЛОВА.

*Тĕплĕнрех – район хаçачĕн сайтĕнче: www.put-pobedy.cap.ru*

## ÇАНТАЛĂК

| | Кĕçнерни кун | |
|---|---|---|
| | 2.2 | |
| кăнтăрла | -19 | |
| çĕрле | -27 | |

| Эрне кун | Шăмат кун |
|---|---|
| 3.2 | 4.2 |
| -20 | -19 |
| -26 | -24 |

*«Метеоновости» информаци агентстви информацийĕ тăрăх.*

## К СВЕДЕНИЮ НАСЕЛЕНИЯ!

8 февраля 2012 года с 11 до 13 часов в здании Шумерлинского межрайонного следственного отдела Следственного управления Следственного комитета Российской Федерации по Чувашской Республике по адресу: г. Шумерля, пер. Школьный, д. 8, будет осуществляться личный прием граждан руководителем Следственного управления Следственного комитета Российской Федерации по Чувашской Республике генерал-майором Мигушовым А.П. по вопросам, отнесенным к компетенции следственных органов Следственного управления Следственного комитета Российской Федерации по Чувашской Республике.

Предварительная запись по телефонам: 8(83536) 5-91-03, 8(83536) 5-91-63.

